# Кӗнекере чӑваш халӑхӗн чунӗ курӑнать




**Наци библиотекинче Чӑваш наци конгресне йӗркеленнӗренпе 30 ҫул ҫитнине, Чӑваш Республикинчи Паллӑ ентешӗсен ҫулталӑкне, Раҫҫей Федерацийӗнчи Халӑхӗсен культура еткерӗн ҫулталӑкне халалланӑ «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» кӗнеке хаклавӗ иртрӗ.**

Чӑвашсем – Раҫҫейри чи пысӑк халӑхсен шутӗнче. Йӑхташсем республика тулашӗнче те йышлӑн пурӑнаҫҫӗ. Вӑтӑр ҫул каялла туса хунӑ общество организацийӗ тӗнче тӑрӑх саланнӑ чӑвашсене пӗрлештерме пултарчӗ. XX ӗмӗр вӗҫӗнче регионсенчи чӑвашсен культура центрӗсен шутласа кӑларма икӗ алӑри пӳрнесем те ҫитетчӗҫ. Паян Чӑваш наци конгресӗ Раҫҫей Федерацийӗн вӑтӑр ҫичӗ субъектӗнчи тата чикӗлеш енчи ҫӗршывсенчи чӑвашсен ҫӗр ытла наци культура пӗрлешӗвӗн аталанӑвне пысӑк тӳпе хывать. Конгресс иртнине, паянхи тата ыранхи пурнӑҫа асра тытса ӗҫлет. Наци чӗрӗлӗвӗ организацин тӗп тӗллевӗ пулса тӑрать.

«Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» кӗнеке конгресӑн ӗҫне хаклать, кӑтартать, унӑн сумне палӑртать. Кӑларӑмра тӗрлӗ ҫулта конгреса ертсе пынӑ, унпа тачӑ ҫыхӑнса ӗҫленӗ ҫынсем ҫинчен каласа панӑ, вӑтӑр ҫул хушшинчи тапхӑрта пуҫаруллӑ ентешсен ырӑ кӑмӑлпа тунӑ ӗҫӗсемпе паллаштарнӑ. Кӗнекере тулай чӑвашӗсен, республикӑри ҫирӗм пӗр районти уйрӑмсен, ЧНК президенчӗ ҫумӗнчи Ваттисен канашӗн, комитетсен ӗҫӗ-хӗлӗ уҫҫӑн курӑнать.

Кӗнекере Чӑваш наци конгресӗн Трак енри уйрӑмӗн ӗҫ-хӗлӗ пирки те тӗплӗн каласа кӑтартнӑ. Ку уйрӑма чи малтан йӗркеленӗ. Ертӳҫи – Красноармейски шкулӗн чӑваш чӗлхипе литератури вӗрентекенӗ Зинаида Михайлова. Пӗрлӗх Трак тӑрӑхӗнче пурӑнакансене чӑвашлӑха туйса тӑма, чӑваш халӑхӗн ырӑ йӑли-йӗркине тытса пыма, халӑх юррисене асра тытма, чӑваш ҫыннин ырӑ енӗсене /ӗҫченлӗхе, ӑсталӑха, тараватлӑха, сӑпайлӑха, пултарулӑха, тӑрӑшулӑха/ малалла та аталантарса пыма, ҫамрӑксене ырӑ тӗслӗх парса тӑма хистет.

Уйрӑмӑн йӑлана кӗнӗ ӗҫӗсем те пур. Вӗсем шутне сӑвӑ тата сочинени ҫыракансен конкурсӗсем, «Улӑп» интернет-викторина, «Туслӑх кӑшӑлӗ» ҫурхи вӑйӑ-юрӑ уявӗ, «Янкас вулавӗсем» ӑслӑлӑхпа таврапӗлӳ конференцийӗ кӗреҫҫӗ. Красноармейскисем республика шайӗнчи тата регионсен хушшинчи конкурс-фестивальсене, ӑмӑрту-викторинӑна та хастар хутшӑнаҫҫӗ.

«Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» кӗнекере ҫырса кӑтартнӑ кашни пулӑм савӑнтарать. Кашни ӗҫе чӑваш ҫынни чунтан тӑрӑшса тӑвать. Ҫавӑнпа та кӗнекере чӑваш халӑхӗн чунӗ палӑрса тӑрать. Вӑл чӑннипех те халӑх кун-ҫулне ҫутатса паракан сумлӑ кӑларӑм.

**Вера АРХИПОВА,**
**ЧНКн культура комитечӗн ертӳҫи.**